чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче “Коммунизм ялавĕ” /халĕ “Хыпар”/ хаçата “ХИСЕП ПАЛЛИ” орденпа наградăланă




"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)


218/26624/ № | Кĕçнерникун, 2014, ноябрь, 6 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru


# Халăхсен пĕрлĕхĕ – чи пысăк пуянлăх!

## Республикăра çакна çирĕплетекен уяв иртрĕ

***Халăх пĕрлĕхĕн кунĕн хăйĕн тĕшши, пĕлтерĕшĕ пур. Енчен пĕтĕмĕшле тытăмра çав ăнлавăн пĕр пĕчĕк пайĕ çеç «чăхăмлама» тытăнсан... Ыттине куç умне кăларма та хăрушă. Кӳршĕ патшалăхрах, авă, тĕнче çаврăнать тейĕн: ĕмĕрĕпе килĕштерсе пурăннă пĕр наци çынни тепринпе паян хĕç-пăшал хăвачĕпе «калаçасшăн». Тĕрĕсрех, унăн вăйĕпе влаçа тытса илнисем ыттисене пăхăнтарса пуç пуласшăн.***



Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăнӳкерчĕкĕ

Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ пуш çĕрте «çуралман». Тĕрлĕ йывăр тĕрĕслев витĕр тухнă Раççейре пурăнакан вун-вун халăх çынни пĕр-пĕринпе килĕштерсе, ăнланса, пулăшса, тăнăçлăхра пурăннинчен хаклăраххи нимĕн те çуккине питĕ аван ăнланать. Чӳк уйăхĕн тăваттăмĕшĕнчи уяв та çакна курăмлă çирĕплетрĕ. Республикăри хуласемпе район центрĕсенче Пĕрлĕх кунне халалланă йышлă митингсем савăнăçлă ларутăрура иртрĕç. Паллах, тĕп уяв Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре пулчĕ. К.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕ умĕнче вырнаçтарнă сцена комплексĕ тĕлне шĕкĕр хуламăрта пурăнакансемпе унăн хăнисем питĕ нумайăн пухăнчĕç. 6х4 метр калăпăшлă экранра сцена çинче мĕн пулса иртнине аякранах сăнама пулать. Шупашкар хулин вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ чуна хăпартлантаракан юрă кĕввисемпе маршсем шăрантарать. Колоннăсем çийĕн Раççей, Чăваш Ен, Шупашкар ялавĕсем вĕлкĕшеççĕ. Транспарантсем тăнăç пурнăçа упрама чĕнеççĕ. Пĕрлĕхре вăй пулнине аса илтереççĕ. Чылайăшĕ кунта çемйисемпе килнĕ, ачасен аллинче – патшалăхпа республика элемĕсем, тĕрлĕ тĕслĕ хăмпăсем...

Сцена çине хăйсен хастар ĕçĕпе, çарти паттăрлăхĕпе, ӳнерти ăсталăхĕпе сум-ят çĕнсе илнĕ çынсем хăпараççĕ. Вĕсен йышĕнче – Афганистан вăрçин ветеранĕсемпе инвалиčĕсен Пĕтĕм Раççейри общество организацийĕн Чăваш Республикин уйрăмĕн ертӳçи, Хĕрлĕ Ялав орденĕн кавалерĕ Геннадий Матвеев, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Валентина Теллина, Чăваш халăх поэчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ - тĕп редакторĕ Валерий Туркай /сăмах май, виççĕшĕ те – Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн шаннă çыннисем/, тата ыттисем – спортсменсем, халăх артисчĕсем, çамрăксен юхăмĕн ертӳçисем, сиплевçĕсем, ăсчахсем... Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, яваплă ытти çын çак самантра халăхпа пĕрле пулчĕ, ăна уявпа саламларĕ. Сăмах илнисем пухăннисене чăвашла та, вырăсла та Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламларĕç.

– Асăннă уяв тăвата ĕмĕр каялла, Дмитрий Пожарский кнеçпе Кузьма Минин ополченец çарĕсем Польша интервенчĕсене Тăван çĕршыв çĕрĕ çинчен хăваласа кăларса янипе çыхăннă, вăл наци астăвăмĕн страницисенче уйрăм йĕркесемпе çырăнса юлнă, – терĕ Афганистан тӳпинче вĕçнĕ паттăр вертолетчик, отставкăри майор Геннадий Матвеев. – Пирĕн халăх 400 çул каялла, Пăтрав тапхăрĕнче Тăван çĕршывăмăрăн никама пăхăнманлăхне упраса хăварчĕ, унăн патшалăх никĕсне çирĕплетрĕ...

– Паттăрсен тапхăрĕнчи йăхташăмăрсен пĕрлĕхĕ, халăхăмăрăн нумай ĕмĕр хушшинчи историйĕ граждансен пĕр шухăшлăхне, пĕрлĕхне, хамăр йăла-йĕркене, ăс-хакăла упраса пурăнсан кăна умри тĕллевсене пурнăçа кĕртме пултарнине кăтартса пачĕ, – палăртрĕ хăйĕн шухăшне Валентина Теллина. – Пирĕн патшалăх, Раççей халăхĕ яланах çирĕп пĕрлĕхпе, пысăк тĕллевсемпе пĕтĕçсе, хăйĕн йăли-йĕркине манăçа кăларманнипе, ăна асра тытса пынипе, юратнă çĕршывăмăрăн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхшĕн хăйĕн пурнăçне те шеллеменнипе палăрса тăнă...

> ✔ АСĂННĂ УЯВ ТĂВАТĂ ĔМĔР КАЯЛЛА ПОЛЬША ИНТЕРВЕНЧĔСЕНЕ ТĂВАН ÇĔРШЫВ ÇĔРĔ ÇИНЧЕН ХĂВАЛАСА КĂЛАРСА ЯНИПЕ ÇЫХĂННĂ, ВĂЛ НАЦИ АСТĂВĂМĔН СТРАНИЦИСЕНЧЕ УЙРĂМ ЙĔРКЕСЕМПЕ ÇЫРĂНСА ЮЛНĂ

– Мĕн вăл халăхсен туслăхĕ? Вăл – чи пысăк пуянлăх, – терĕ Чăваш халăх поэчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Валерий Туркай. Валерий Владимирович тăван халăхăмăрăн сумлă тепĕр поэчĕн Петĕр Хусанкайăн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр» сăввине пысăк хавхаланупа вулани уяв йĕркипе пĕр килнĕн янăрарĕ.

Аякри Крым çурутравĕнчен килнĕ хăнасен ячĕпе Севастополь хулинчи чăвашсен наци-культура обществин ертӳçи Владимир Мочалов Чăваш Енри йăхташăмăрсене Пĕрлĕх кунĕпе ăшшăн саламларĕ: «Çур çул каялла кăна эпĕ çак сцена çинче тăтăм, хаклă ентешĕмĕрсем, Крымра тата Севастопольте пурăнакан чăвашсен ячĕпе сирĕнтен пире Раççей Федерацийĕн йышне кĕмешкĕн пулăшма ыйтнăччĕ. Эсир пире ăнлантăр, пысăк пулăшу кӳтĕр. Пире сирĕнпе юнашар пулма, пĕрле Пĕрлĕх кунне палăртма питĕ кăмăллă. Крым – халĕ Чăваш Республики евĕрех, эпир – пĕр статуслă республикăсем. Крым тата Севастополь – Раççей йышĕнче. Республикăна Халăхсен пĕрлĕх кунĕпе хĕрӳллĕ салам калатпăр».

2014 çул пирĕншĕн ăнăçлă килчĕ. Экономика аталанăвĕнче, промышленноç ӳсĕмĕнче, строительствăра, пултарулăхра, спортра çитĕнӳ пур. Вĕсем пĕчĕк мар. Умра – çĕнĕ тĕллевсем. Çитес çул та историшĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмсемпе пуян. Вĕсенчен пĕри – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пысăк çухатупа, халăхсен пĕрлĕхĕпе çĕнсе илнĕ Çĕнтерĕвĕн 70 çулхи юбилейĕ. Рейхстаг çине Çĕнтерӳ ялавне çĕкленĕ кун мĕн чухлĕ аяккарах кайса пырать – çавăн чухлĕ унăн пĕлтерĕшĕ ӳсет. Вăл Халăхсен пĕрлĕхĕн кунĕ евĕрех, ĕмĕрхи – уяв.

Раççей Гимнĕ янăранă май волонтерсем патшалăхăн пысăк элемне – Ялавне – лапама илсе тухрĕç, тӳпене унпа пĕр тĕслĕ, ăна сăнлакан хăмпăсем вĕçсе хăпарчĕç.

Уява сцена ăстисем малалла тăсрĕç. Республикăри пултарулăх коллективĕсене Мускавран ятарласа хăнана килсе çитнĕ «Здравствуй, песня!» ансамбль улăштарчĕ.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

ÇАВРА СĔТЕЛ

# Пĕрле-и е уйрăм-и? Е дефиспа та юрать-и?

## Чăваш чĕлхин орфографи ыйтăвĕсене татса пама тахçанах вăхăт çитнĕ

***Вăл е ку сăмаха епле çырасси паян тапраннă сăмах мар. Чылайăшне /чĕлхеçĕсене, çыравçăсене, хаçат е кĕнеке вулакансене.../ тахçанах калаçтарать вăл.***

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Петр Краснов ертсе пынă «çавра сĕтел» ларăвĕнче чăваш чĕлхин орфографи тата пунктуаци правилисене улшăнусем кĕртессине пăхса тухрĕç. Унта депутатсем, министрсем, ăслăлăх çыннисем, чĕлхеçĕсем, çыравçăсем, вĕрентекенсем, общество ĕçĕн хастарĕсем тата ыттисем хутшăнчĕç. Сăмахсене тĕрĕс çырас енĕпе «революци тумасăр, пĕр-пĕрин пĕлĕвне шута илсе пĕр шухăшлăх патне çитме» палăртрĕç вĕсем.

Правилăсене улшăнусем кĕртес ыйтăва ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов февраль уйăхĕнче ирттернĕ брифингра та çĕкленĕччĕ. Ун чухне парламент спикерĕ орфографи правилисене чи малтан экспертсен хак памаллине, унтан тин Патшалăх Канашĕн, ĕç тăвакан влаçăн вăл е ку йышăнăва çирĕплетмеллине палăртнăччĕ. Профильлĕ Комитет ертӳçин Петр Красновăн шухăшĕ урăхларахчĕ. Вăл «улшăнусем кĕртме хистекен самантсем пуррине» пĕлтернĕччĕ. Халĕ йĕркеленĕ «çавра сĕтелте» те çак шухăш ытларах палăрчĕ. Чылайăшĕ иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчи реформа /унпа килĕшӳллĕн хутлă сăмахсене уйрăм çырма пуçлани/ васкаварлă тата вăхăтсăр пулнине палăртать.

Çак йышăнăва тĕплĕ шухăшламасăр çирĕплетни «Чăваш Республикин чĕлхе çинчен» саккунне пурнăçлама та чылай чăрмантарнине пĕлтерчĕ культура министрĕ Вадим Ефимов. «Республикăри пичет тата электрон информаци хатĕрĕсенче архаизмсемпе анлă усă кураççĕ. Çавна май çыру чĕлхи калаçу чĕлхинчен уйрăм аталанса пыни сисĕнет. Çынсене, уйрăмах хулара ӳссе çитĕннисене, чăвашла çырнине ăнланма питĕ йывăр. Çакна пулах тата чăваш чĕлхипе кулленхи пурнăçра усă курасси чакса пырать», – терĕ министр. «Шкулта кивĕ правилăсемпе вĕреннĕ. Университетра – çĕннипе. Апла пулин те манăн кивĕллех çырас килет», – хушса хучĕ вăл юлашкинчен.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕн Юрий Исаевăн шухăшĕпе – «сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефиспа çырасси хальхи вăхăтра чĕлхе пĕлĕвĕн анинче вăй хуракансемшĕн, чăваш чĕлхине аслă тата вăтам шкулта вĕрентекенсемшĕн нимĕнле йывăрлăх та кăларса тăратмасть. Çĕнĕ правилăсене йышăнманнисем – пурте тенĕ пекех аслă ăру çыннисем». «Чĕлхеçĕсене «чăваш чĕлхине вырăслататăр» тесе айăплакансенчен ытларахăшĕ хăйсем вырăсланни курăнать. Нумай çын вырăсла шухăшлава куçать те чăваш чĕлхин вырăс чĕлхинче çук уйрăмлăхĕсене тăван чĕлхемĕрĕн çитменлĕхĕ тесе хаклама, кулăшла контекстсем ăсталама, вырăс чĕлхи шайне çитермелли саплаштарусем шырама пуçлать. Хальхи орфографи правилисене, тĕпрен илсен, И.А.Андреев профессорăн теорийĕ çине таянса хатĕрленĕ, пулас ăрусене вĕренме çăмăлтарах пултăр тесе тунă. Унччен пĕрле çырнă сăмах майлашăвĕсене кивĕллех çырма ирĕк парса пĕрле çырас текенсен интересĕсене те шута илнĕ. Ятарлă асăрхаттарура каланă тăрăх – пĕрле е уйрăм çырассине текста тĕрĕс те уçăмлă ăнланассипе çыхăнтармалла», – терĕ Юрий Николаевич.

ЧНК президенчĕ Николай Угаслов «чĕлхе ыйтăвне халăхпа канашласа, çав вăхăтрах ăсчахсен сăмахне итлесе татса пама» сĕнет. «Мĕнпур япалана наука вĕрентнĕ пек тумалла. Вара тин ăнăçу пулать. Чăваш чĕлхине шкулта вĕрентни кăна çителĕксĕр. Ача садĕнче пуçламалла çак ĕçе», – терĕ вăл. Анчах... Республикăри хăш-пĕр шкулта 5-11 классенче чăваш чĕлхипе литературин сехечĕсем чакрĕç. Çапла тума РФ Вĕрентӳ министерствин хушăвĕ хистет. Документпа килĕшӳллĕн тăван /вырăс мар/ чĕлхе регион компоненчĕ шутланать, вĕрентĕвĕн федераци компонентне кĕмест. Çавна май пилĕк кунлă вĕренӳ эрни çине куçнă май сехетсене ирĕксĕрех чакарма тивет. Çĕнĕлĕх тăван чĕлхене вĕрентессине сиенлеме пултарассине палăртрĕ вĕрентӳ министрĕ Владимир Иванов.


● ➡ 2 стр.


### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*

### Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчи полномочиллĕ представителĕ çинчен

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕпе çыхăну тытса ĕçлессине тивĕçтерес тĕллевпе **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин юстици министрне Надежда Викторовна Прокопьевăна Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Чăваш Республикинчи Патшалăх Канашĕнчи полномочиллĕ представительне çирĕплетес.

2. Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2012 çулхи январĕн 13-мĕшĕнче «Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчи полномочиллĕ представителĕ çинчен» кăларнă 5-мĕш Указĕ вăйне çухатнă тесе йышăнас.

3. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, октябрь, 31, 148 №.

### Саламлатăп

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăларнă 149-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн наукăпа педагогикăри, культурăна аталантарас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата общество ĕçĕнчи хастарлăхшăн Шупашкар хулинчи педагогика наукисен кандидатне, ĕç ветеранне **Дмитрий Егорович ЕГОРОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медалĕпе наградăланă.

* * *

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăларнă 150-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин промышленноçне аталантарас ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн Шупашкар районĕнчи тулли мар яваплă «Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура завочĕ» обществăна **ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă.


КУН хыççăн КУН
☎ 56-04-26, 28-82-91


### Преми укçи – ача сачĕ валли

***Октябрĕн 30-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн Правительствин ларăвĕ иртнĕ. Унта бюджетсен хушшинчи трансфертсен мелĕпе 3 млрд та 430 млн та 149 пин тенкĕлĕх грантсене ĕç тăвакан влаçăн вырăнсенчи органĕсен 2013 çулхи ĕç-хĕлĕн тухăçлăхне хакланине тĕпе хурса Раççейĕн 20 субъекчĕ хушшинче валеçнĕ.***

Рейтинга хатĕрленнĕ чухне çак кăтартусене тĕпе хунă: çынсен пурнăçĕн тăршшĕ тата тупăшĕ, ĕççĕрлĕхе чакарни, вĕрентӳ пахалăхĕ, ачасем тăлăха юласран сыхланмалли профилактика, хута янă пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕ. Çавăн пекех уйрăм çынсем хывнă инвестицисен калăпăшне, регионсен бюджечĕсене кĕнĕ налуксен тата ытти тӳлев виçине, пĕчĕк тата вăтам бизнес аталанăвĕн шайне, социаллă ыйтăмсем йĕркелесе регионсенче пурăнакансен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлнин кăтартăвĕсене шута илнĕ.

РФ Правительстви хакланă тăрăх – Чăваш Республики пĕтĕмĕшле рейтингра 14-мĕш вырăн йышăннă, куншăн 165 млн та 59 пин тенкĕ грант илĕ.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче вырăнти хăй тытăмлăх ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕ тухăçлă ĕçшĕн илнĕ федераци укçине Шупашкарти микрорайонсенчен пĕринче ача сачĕ тума ярассине пĕлтернĕ. Хула администрацине Шупашкар çыннисене питĕ кирлĕ социаллă çак объект строительстви валли вырăн суйласа илме сĕннĕ.

Федераци субъекчĕсен ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕç-хĕлĕн чи лайăх кăтартăвĕсемшĕн хавхалантармалли бюджет ассигнованийĕсене уйăрассине «Федерацин 2014 çулхи, планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи бюджечĕ çинчен» саккунпа çирĕплетнĕ, укçана патшалăхăн «Регион политики тата федераци хутшăнăвĕсем» программăпа килĕшӳллĕн уйăраççĕ.

**Н.АНДРЕЕВ.**

### Великановсем – 75 çул пĕрле

***Чӳк уйăхĕн 4-мĕшĕнче ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕн çумĕ-сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова Çĕнĕ Шупашкарти Великановсен çемйине 75 çул пĕрле пурăннă ятпа саламланă. Темиçе кун маларах вара Великановсем çемье пуçĕ – Иван Иванович – 100 çул тултарнине палăртнă.***

Вице-премьер юбилярсемпе тата вĕсен тăванĕсемпе, юлташĕсемпе пĕрле уяв кĕрекине те ларнă. Алла Владимировна телейлĕ мăшăра çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр суннă. Министрпа пĕрле ветерансене Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Олег Бирюков, Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн социаллă хӳтĕлев пайĕн пуçлăхĕ Василий Кочетов, хула Пухăвĕн депутачĕсем саламланă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Иван Великанов Мари Республикинчи Покровское салинче çуралнă. Иван Иванович Мускав, Тула хулисене хӳтĕленĕ, виçĕ хутчен аманнă, нумай орден-медале тивĕçнĕ. Вăрçă хыççăн Иван Иванович вăрман промышленноçĕнче вăй хунă. Ĕç ветеранĕ вăл. Клавдия Павловна та ĕç ветеранĕ, чылай çул бухгалтерта, счетоводра, паспортисткăра тăрăшнă. Великановсем пурнăç çулĕпе чылайранпа пĕрле утаççĕ, вĕсем 3 ывăл пăхса ӳстернĕ. 7 мăнукпа 7 кĕçĕн мăнук хĕпĕртев кӳрет вĕсене.

**А.ГРОМОВА.**

### Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, кăштах çумăр çукалать. Çил çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2 градус ăшă, çĕрле 0 градус.** Атмосфера пусăмĕ 755 мм, сывлăшри нӳрĕк 98 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 51 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, кăштах юр çукалать. Çил кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 0 градус, çĕрле 1 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 82 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 47 минут.**

# Туслăх çăлĕ тĕнчене

## Чăваш Енре этнополитика лару-тăрăвĕ тăнăçлă

***Чăваш Енре 128 халăх çынни пурăнать. Хăшĕсем пысăк йышпа, теприсем – иккĕн-виççĕн çеç. Тĕслĕхрен, 2010 çулхи çырав тăрăх чăвашсем 814,8 пин çын, вырăссем – 323,3, тутарсем – 36, мордвасем – 13, çармăссем – 3,6 пин. Пирĕн йышра çавăн пекех эрмен, таджик, узбек, ытти халăх çынни те пур. Халăхсен хушшинчи хутшăну республикăра çивĕч ыйтусен ретĕнче тăмасть. Шăпах çапла ан пултăр тесе ĕçлеççĕ вырăнти халăхсен наци культура пĕрлешĕвĕсен, тĕнсемпе конфессисен пĕрлĕхĕсен ертÿçисенчен пуçласа республика ертÿлĕхĕ таранах.***



Çакна ноябрĕн 4-мĕшĕнче – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче – Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче «Чăваш Республикин халăхĕсен этнокультура аталанăвĕ» ятпа ирттернĕ «çавра сĕтел» тепĕр хут çирĕплетрĕ. Унта наци культура пĕрлĕхĕсен, тĕн конфессийĕсен ертÿçисем, ЧР Культура министерстви çумĕнчи Национальноçсен ĕçĕсен канашĕн членĕсем, влаç органĕсен представителĕсем, тĕн çыннисем пулчĕç. «Çавра сĕтел» ĕçне Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнни мероприятие чĕрĕлĕх кĕртрĕ.

«Çавра сĕтеле» ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов ертсе пычĕ. Вадим Петрович шухăшĕпе – Чăваш Енри этнополитика лару-тăрăвĕ, пĕтĕмĕшле илсен, – çирĕп, конфессисен хушшинчи хутшăнусем йĕркеллĕ, хирĕçÿсĕр. Çапла тума май параканĕсем – республикăна ертсе пыракансем, общество организацийĕсем, национальноçсемпе тата тĕн пĕрлĕхĕсемпе çыхăннă канашсем.

Михаил Игнатьев мероприятие хутшăннисене Халăх пĕрлĕхĕн кунĕпе саламланă май çак кун 402 çул каяллах сăваплă пулнине палăртрĕ. 1612 çулта Дмитрий Пожарский тата Кузьма Минин ертсе пынипе халăх ополченийĕн салтакĕсем Мускава тăшмансенчен хăтарнă, паттăрлăхпа танах халăх мĕнле тымартан тухнине, пурнăçра мĕнле вырăн йышăннине, мĕнле тĕне ĕненнине пăхмасăр пĕр шухăшлă иккенне палăртнă.

Республика ертÿçин шухăшĕпе – Аслă Раççей халăхĕсем пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнаççĕ пулсан та кашниййĕ хăйĕн чĕлхине, ĕненĕвне, культурине, йăли-йĕркине сыхласа хăварнă. «Тĕнчери пăтрашуллă саманара Раççей халăхĕ пĕр чăмăра чăмăртанать, хăйĕн пултарулла вăйне кăтартать», – терĕ Михаил Игнатьев.

Республика Пуçлăхĕ Чăваш Ен çыннисем Раççей халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине çак тĕслĕхпе çирĕплетрĕ: кăçал республика Украинăран тарса килме тивнĕ 3925 çынна йышăннă. Вĕсенчен хăшĕ каярах ытти вырăна тăванĕсем патне куçса кайнă. Халĕ 509 çын ĕçе вырнаçнă, шкул ачисем шкула çÿреççĕ, кĕçĕн çултисем – ача садне.

«Пирĕн вăй – культура тата конфесси нумай енлĕхĕпе пĕрлĕхре, – терĕ Михаил Игнатьев. – Влаç органĕсен, общество организацийĕсен Чăваш Енре пурăнакансем, Раççей çыннисем ыранхи пурнăçа шанса тăма, ачисемшĕн лăпкă пулма пултарччăр тесе хăйсенчен мĕн кирлине пĕтĕмпех тума тивĕç».

«Çавра сĕтеле» хутшăннисене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, тĕн представителĕсем саламларĕç.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ Юрий Исаев «Чăваш Республикинчи этнокультура аталанăвĕ тата халăхсен хутшăнăвĕ» темăпа тунă доклад институтăн 2014 çулти социологи пĕтĕмлетĕвĕ пулчĕ.

Кăçалхи август уйăхĕнче Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш, Куславкка, Улатăр, Çĕмĕрле, Çĕрпÿ, Етĕрне хулисенче тата Улатăр, Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка тата ытти районта пурăнакан 604 çынран ыйтса пĕлнĕ.

«Раççей гражданĕшĕн чи пĕлтерĕшли мĕн тесе шухăшлатăр?» ыйту пирки 68,7 процентĕ «патшалăх пĕрлĕхĕ» тесе хуравланă, 47,2 процентĕ – халăхсен туслăхĕ, 43 процентĕ – пирĕн пĕрлехи аваллăх, истори. «Хăвăрăн халăхăрпа сире мĕн çыхăнтарать?» ыйтăва çапла хуравланă: тăван чĕлхе – 55 процент, пĕр территори – 51,5 процент, йăла-йĕрке, культура – 35,3 процент. «Халăх çыравĕн вăхăтĕнче халăхсен нацилĕхне тата тĕнне шута илмелле-и?» ыйту пирки хуравсем çапларах: нацилĕхе çеç – 28,3 процент, тĕне çеç – 1 процент, ăна та, кăна та – 33,3 процент.

«Çавра сĕтелте» тухса калаçакансем чылайăн пулчĕç.

**«ПИРĔН ХАЛĂХ ЯЛАНАХ ЧУН-ЧĔРЕ ĂШШИПЕ, ЫРĂ КĂМĂЛĔПЕ, ПУЛĂШМА ХАТĔРРИПЕ ПАЛĂРСА ТĂНĂ**

Азербайджансен Раççейри конгресĕн Чăваш Енри уйрăмĕн председателĕ Азиз Бадиров хăйне Чăваш Енре тăван килĕнче пек туйнине палăртрĕ. Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов общество ĕçĕнчи тĕп тĕллевне республикăра тĕпленсе пурăнакан халăхсен хушшинчи туслăха малалла çирĕплетнинче, пĕрлехи мероприятисем ытларах ирттермеллинче курать.

Халăхсен пĕрлĕхĕн кунĕнче Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче çавăн пекех наци культурисен «Раççей халăхĕсен пĕр çемйи» республика фестивалĕ те иртрĕ. Театр фойинче тĕрлĕ халăх çыннисем хăйсен пуян культурин, йăли-йĕркин, наци апачĕн пуянлăхне уçса паракан куравсемпе стендсем йĕркеленĕ, кĕвĕ-çемĕ хуçаланчĕ, халăх савăнчĕ, юрларĕ-ташларĕ.

Гала-концерта ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Халăх пĕрлĕхĕн кунне Раççейри нумай нациллĕ халăхăн патриотизмĕн паллийĕпе танлаштарчĕ.

«Пирĕн халăх яланах чун-чĕре ăшшипе, ырă кăмăлĕпе, пулăшма хатĕррипе, пĕршухăшлăхĕпе палăрса тăнă. «Йышпа тем те тума пулать», – тенĕ ватăсем. Чăнах та çапла: пĕрлĕхре – пирĕн вăй», – терĕ вăл.

Михаил Васильевич çавăн пекех Чăваш Енри халăхсен хушшинчи туслăха, хутшăнăва çирĕплетес тĕлĕшпе хăйсен тÿпине хывнă çынсене Тав çырăвĕпе чысларĕ. Çак хисепе Азербайджансен Раççейри конгресĕн Чăваш Енри уйрăмĕн председателĕ Азиз Бадиров, Чăваш наци конгресĕн президиумĕн членĕ Юрий Зорин, республикăри мордва культура центрĕн Шупашкарти филиалĕн председателĕ Любовь Петрякова, Вырăс культура центрĕн Шупашкарти уйрăмĕн ертÿçи Ольга Сергеева тивĕçрĕç.

ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР Патшалăх Канашĕн комитет ертÿçи, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш Енри уйрăмĕн секретарĕ Николай Малов та сăмах илчĕç, наци культура пĕрлĕхĕсен хастарĕсене Тав çырăвĕсемпе хавхалантарчĕç.

Уяв концертне республикăри тĕрлĕ халăх коллективĕсем – мордвасен «Умарина», «Эрзянка», тутарсен «Мишар», казаксен «Раздолица», вырăссен «Родные просторы», «Завалинка» тата ытти те – илем кÿчĕç. Чăваш культурипе Чăваш наци конгресĕ çумĕнчи «Янра, юрă» ушкăн, музыка училищинчи «Янтал» фольклор коллективĕ, «Сувар» халăх ташă ансамблĕ, районсенчен килнĕ фольклор коллективĕсем паллаштарчĕç.

■ **Надежда СМИРНОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăнÿкерчĕкĕ

---

ШУХĂШ

# Çутçанталăк синкерĕ чăтăмлăхпа харсăрлăха тĕрĕслерĕ

## Чи пĕлтерĕшли – халăх лару-тăрăва ăнланни

***«Халĕччен çутçанталăкăн кун пек синкерĕ пулнине курман, ас тумастпăр та», – шăпах çак шухăша палăртрĕç республикăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакан ватă çынсем кăçалхи октябрь уйăхĕнче пулнă инкек пирки сăмах пуçарсан.***

Пурте ас тăватпăр: октябрĕн 17-мĕшĕнче пăрлă çумăр тата йĕпе юр çунăран çулсем, электропередача линийĕсем, йывăççем, çуртсем пăр сийĕпе витĕнчĕç. Йывăç турачĕсем пăр йывăрăшне чăтаймасăр хуçăла-хуçăла анчĕç: тротуарсемпе çулсене хупласа хурса иртен-çÿрене, транспорта чăрмантарчĕç, çывăхри машинăсем çине ÿксе вĕсене сиенлерĕç. Хĕллехи урапа çине куçма ĕлкĕреймен /çанталăк çапла хăвăрт сивĕтессе нумайăшĕ кĕтменха та!/ автомобильсен хуçисене те пăрлă çул çинче çăмăлах килмерĕ. Проводсем пăрланнăран хулара троллейбуссем çÿреймерĕç. Электропередача линийĕсем чылай çĕрте татăлчĕç, юписем /çав шутрах тимĕр-бетонран тунисем те/ тÿнчĕç, çакна пула 12 муниципалитет йĕркеленĕвĕнчи – Элĕк, Вăрнар, Куславкка, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Вăрмар, Çĕрпÿ, Шупашкар, Çĕмĕрле тата Етĕрне районĕсенчи – ялсенчи çуртсем, çав шутра социаллă объектсем те, çутăсăр юлчĕç. Октябрĕн 19-мĕшĕ тĕлне электричествăсăр юлнă çынсен шучĕ 100 пинрен те иртнĕ.

Юрать-ха çакăн пек йывăр самантра влаç органĕсем тата тĕрлĕ синкерпе кĕрешекен службăсем çухалса каймарĕç: аварисен сиенне пĕтерес тĕллевпе кирлĕ йышăну турĕç, хăйсен тивĕçĕсене таса чĕререн пурнăçларĕç. Республика Правительстви инкеклĕ лару-тăрăва малтанхи тапхăртанпах хăй тĕрĕслесе тăма пуçларĕ. Эрне кун каçхинех оперативлă штаб туса хунă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев октябрĕн 19-мĕшĕнче Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен комиссин тата оперативлă штабăн пĕрлехи ларăвне ирттернĕ, унта авари сиенне пĕтерес тата юсав енĕпе ĕçлекен мĕн пур служба представителĕсене явăçтарнă. Шăпах çав канашлура регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăру режимне ĕçе кĕртни çинчен пĕлтернĕ. Михаил Игнатьев çак режима пăрахăçличчен ку ыйтупа кашни кунах видеоконференци ирттерчĕ. Оперативлă службăсен ертÿçисем тата шар курнă муниципалитет йĕркеленĕвĕсен пуçлăхĕсем юсав ĕçĕсем еплерех пынипе паллаштарчĕç. Чăваш Ен Пуçлăхĕ пăрлă çумăр тата йĕпе юр çунăран сиенленнĕ объектсене хăй те тĕрĕслерĕ, Шупашкар хулипе районне, Муркаш тăрăхне çитсе килчĕ. «Кашни çын электроэнергипе тепĕр хут туллин усă курма пуçламасăр регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăру режимне пăрахăçламăпăр», – терĕ Михаил Игнатьев.

Синкер сиенне пĕтерме хутшăннă пĕтĕм служба, организаци-предприяти, специалистсем лайăх ĕçленине палăртмалла. Шăматкун, октябрĕн 18-мĕшĕнче, çанталăк сивĕтнĕрен электричество юписем тата хулăнрах пăрпа витĕнчĕç, çавăнпа вĕсем çине электромонтерăн тимĕр хатĕрĕпе хăпарма май килмен, линисене юсас тесен автовышкăпа усă курма тивнĕ. Ку ĕçе республикăри организацисенче пур пĕтĕм автовышкăна /60-а яхăн/ явăçтарнă. Электриксем çитменрен кÿршĕ регионсенчен пулăшу ыйтнă. Сывлăшри сиенленнĕ электропередача линийĕсене юсама Самар, Ульяновск, Пенза, Саратов, Чул хула, Оренбург, Киров, Владимир облаçĕсен, Мордва Республикин бригадисем килсе çитнĕ. Юсав ĕçĕсене пĕтĕмпе 94 бригада /474 çын/ хутшăннă, техникăн 143 единиципе усă курнă. Талăкĕпех ĕçлекенскерсене кунне виçĕ хутчен вĕри апат çитернĕ. Пĕр талăкра çеç вĕсем /октябрĕн 19-мĕшĕнче/ 34 пин çынна электроэнергипе тивĕçтерессине çĕнĕрен йĕркелеме пултарнă, 5 муниципалитет йĕркеленĕвĕнче юсава вĕçленĕ. Бригадăсем ытти кунра та ырми-канми ĕçлерĕç, çавна май çутăпа усă курма пуçланă ял-поселок шучĕ ÿссех пычĕ. Специалистсене синкерĕн малтанхи кунĕсенче пĕр çĕрти проводсене юсаса пĕтернĕ çĕре тепĕр тĕлти линисем çинеçинех татăлни те шиклентермерĕ.

Социаллă пĕлтерĕшлĕ объектсене, чи малтан – сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсене, электричество парас тĕллевпе синкерĕн пĕрремĕш кунĕсенче бензин, дизель генераторĕпе усă курнă, пушар хăрушсăрлăхне тата санитари нормисемпе правилисене тивĕçтермелли мерăсем йышăннă. Шкулсем çутăсăр тата ăшăсăр /электроэнерги çукран чылайăшĕнче котельнăйсем ĕçлемен/ юлнăран вĕренекенсене юсав вĕçлениччен кĕркуннехи каникула янă. Садиксене çÿрекен ачасен темиçе кун килĕнчех ларма тивнĕ.

Чи пĕлтерĕшли – темиçе талăк çутăсăр ларма тивсен те халăх нăйкăшманни, лару-тăрăва ăнланса йышăнни, тÿсĕмлĕхпе чăтăмлăха çухатманни, çынсем пĕр шухăшлăн пулса, пĕр йыша чăмăртанса юсав ĕçĕсене – хуçалнă йывăççене касса тирпейленĕ, проводсене пăртан тасатнă çĕре – хутшăнни. «Çут çанталăк синкерне пула электричество юписем чалăшрĕç, вĕсене ял халăхĕ тĕревлеме ĕлкĕрнĕрен çеç пĕри те хуçăлмарĕ, çапах пирĕн те темиçе кун çутăсăр ларма тиврĕ. Фермăра ĕçлекенсем выльăха ала вĕççĕн апат пачĕç, шывне çăлран турттарчĕç», – каласа кăтартрĕ Муркаш районĕнчи Рыккакасси ял тăрăхĕн депутачĕ Венера Акимова. «Атăл çинчи МРСК» АУО специалисчĕсем 10 кВт напряжениллĕ линисене хута ярас тесе ырмиканми ĕçленĕ вăхăтра ялсенчи электриксем пĕчĕк вольтлă проводсене юсас енĕпе тăрăшнă. Аварисене пĕтерес ĕç еплерех пынипе паллашмашкăн эпир Шупашкар районне кайнăччĕ те – унти Çырмапуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Рамиль Гельметдинов вырăнти халăх вăй çитнĕ таран ĕçленине, ялсене тасатнине, тивĕçлĕ канури Владимир Иванов электрик çутă линийĕсене юсанине пĕлтернĕччĕ. Çакнашкал тĕслĕхсене кашни ял тăрăхĕпех илсе кăтартма пулать.

Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев юсав ĕçĕсем кал-кал пынăшăн мĕн пур службăна, организаци-ведомство ертÿçисемпе специалисчĕсене чĕререн тав турĕ. Ку енĕпе пĕтĕм шайри влаç органĕсем пĕрпĕринпе тачă çыхăнса ĕçленине палăртрĕ. Михаил Васильевич çавăн пекех кашни канашлурах республикăра пурăнакансене те лару-тăрăва ăнланнăшăн, тÿсĕмлĕ пулнăшăн, синкер сиенне пĕтерме хутшăннăшăн тав сăмахĕ каларĕ. Чрезвычайлă лару-тăрăвăн режимне пăрахăçласси пирки калакан хушăва вăл октябрĕн 24-мĕшĕнче алă пуснă. Çав кун 12 сехет тĕлне Чăваш Республикин халăх тивĕçтерĕвĕн тытăмне туллин ĕçе кĕртнĕ, синкер сиенне пĕтерес енĕпе пĕтĕм мероприятие пурнăçланă. Çак тапхăрта 515 ял-поселока электроэнерги тепĕр хут пама пуçланă /вĕсенче пĕтĕмпе 100964 çын пурăнать/, 94 шкула, 40 ача садне, социаллă сферăн 7 объектне ăшăпа тата çутăпа тивĕçтернĕ. Сăмах май, Мускав облаçĕнче 2010 çулта пăрлă çумăр çунăран 400 пин çын электричествăсăр тăрса юлнă, унта аварисене 13 кун иртсен тин пĕтерме май килнĕ.

Çапла, Чăваш Енре халĕччен пулман çут çанталăк синкерĕ вырăнти влаç органĕсемпе халăхăн чăтăмлăхĕпе çаврăнăçулăхне, кĕтмен лару-тăрура кирлĕ йышăну тума тата ĕçлеме пултараслăхне тĕрĕслерĕ. Республика ертÿçисем çухалса каймарĕç, шар курнă çынсене вăхăтра пулăшу кÿчĕç. Çакăншăн вĕсене кĕске вăхăтрах тепĕр хут электричествăпа усă курма пуçланисем чĕререн тав тăваççĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

---

# Пĕрле-и е уйрăм-и? Е дефиспа та юрать-и?

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

Элĕк вăтам шкулĕ республикăра чи малтан çĕнĕ йĕркепе ĕçлеме пуçланă. Шкул директорĕ Владислав Волков чăваш чĕлхине дистанци мелĕпе вĕрентме шухăшланине палăртрĕ. «Урăх çĕршывсенче пурăнакансем те халĕ пирĕн шкул сайтне кĕрсе чăвашла вĕренме пултараççĕ», – терĕ вăл. ЧР Вĕрентÿ институчĕн кафедра пуçлăхĕн Анна Егоровăн шухăшĕпе – пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр чĕлхене вĕренме, аталантарма çук. «Орфографи çинчен калаçмасăрах чуна ыраттаракан ыйту чылай пирĕн. Тавлаштараканни, ахăртнех, пĕтĕмпе те 50 сăмах çеç», – терĕ А.Егорова.

**ЛАРУРА СĂМАХСЕНЕ ТĔРĔС ÇЫРАС ЕНĔПЕ «РЕВОЛЮЦИ ТУМАСĂР, ПĔР-ПĔРИН ПĔЛĔВНЕ ШУТА ИЛСЕ ПĔРШУХĂШЛĂХ ПАТНЕ ÇИТМЕ» ПАЛĂРТРĔÇ**

Виталий Станьял ăсчах та орфографи пирки калаçма пăрахмаллине пусарсах каларĕ. «Чĕлхе ыйтăвне пĕлекен çынсен сÿтсе явмалла», – терĕ вăл. Çак шухăша Петр Яковлев поэт та палăртрĕ. «Чунпа поэт эпĕ, специальноçпа – лингвист. Çыравçă пулни сăмахсене пĕрлештерме хистет, чĕлхеçĕ пулни – уйăрма. Халĕ манăн мĕнле çырмаллаши? Нумай тĕрлĕ шухăш каларĕç «çавра сĕтелте». Анчах вĕсем пурте тăван халăх пуласлăхĕшĕн пăшăрханса каланă сăмахсем. Хулара чăвашла вĕрентме пуçлассишĕн еплерех «çапăçрĕç»? Тÿрех чăвашла калаçса каяссине кĕтме çук. Уйрăм е пĕрле çырассине чĕлхеçĕсен татса памалла. Юрий Исаев каланине шута илмелле».

Чĕлхе пуласлăхĕшĕн «çапăçнине» «Хыпар» хаçатăн тĕп редакторĕ Валери Туркай та аса илчĕ. «Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенче тăван чĕлхе пуласлăхĕшĕн хĕрÿ кĕрешÿ пычĕ. Выçă та лартăмăр. Чăваш чĕлхипе вырăс чĕлхи пĕр тан пулса тăчĕç. 1994 çулта çĕнĕ правилăсене çирĕплетрĕç. Юлашки сăмаха специалистсен каламалла тесе шухăшларăмăр. Анчах вĕсен сăмахĕ мĕн пуррине аркатса тăкасси пирки пулчĕ. Чи малтан «Хыпар» никампа канашламсăр çĕнĕ правилăсем çине куçрĕ. Çав правилăсене эпĕ нихăçан та йышăнман, йышăнмастăп та. Çĕмĕрмесĕр, аркатмасăр орфографин йĕркеллĕ правилисем патне куçатпăр», – терĕ Валерий Владимирович.

В.Туркай палăртнă «йĕркеллĕ орфографи правили» е ЧР Патшалăх Комитечĕн председателĕ Петр Краснов калашле «пирĕн тĕп документ» е 20 çул каялла йышăннă «çĕнĕ правилăсем» вăл – Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ тата Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ йышăннă «Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем». Ăна И.Андреев профессор редакциленĕ. Авторсен йышĕнче – И.Андреев, Ю.Виноградов, И.Павлов. Правилăсене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ В.Шурчанов 1994 çулхи ноябрь уйăхĕн 13-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ. 1995 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче «Хыпар» хаçатра пичетлесе кăларнă.

«Правилăсен» 75-мĕш параграфĕнче çапла çырнă: «Текста тĕрĕс ăнланма чăрмантарман чухне сăмах майлашăвĕсене уйрăм çырмалла. Çапах та çынсен ăс-тăнĕнче чылай сăмах ушкăнне вĕсен пĕлтерĕшĕпе формине кура пĕр сăмаха пĕрлештерес туртăм пур. Çак туртăмпа килĕшÿллĕн ку тăранччен пĕрле çырма хăнăхнă сăмахсене малашне те çаплах çырма юрать: *авăнçи, айсарăм, акапуç, акатуй, акаçи, алăсталăх, алăстаçă, алăсти, алĕç, алпалли, алçемми, алçыру, алылмаш, арçын, арçури, амаçури, атпăри, ăçтиçук, ĕçкунĕ, кĕлту, кĕраки, мăнакка, мĕнпур, пурпĕр, пуçхĕрлĕ, сакай, сăнÿкерчĕк, сăхсăх, сухапуç, çăлкуç, çăматă, çĕршыв, çулпуç, çураки, çутĕç, улатакка, хĕрача, хытхура, чĕрçитти, чупту, шурăмпуç, шурут; тунтикун... вырсарникун; вунпĕр... вунтăххăр, сакăрвуннă, тăхăрвуннă, икçĕр... тăхăрçĕр; икчĕлхелĕх, пĕрпеклен, çулçÿрев, тавракурăм, тĕлпулу* т.ыт.те.

Пĕрле е уйрăм çырассине текста тĕрĕс те уçăмлă ăнланассипе çыхăнтармалла: *пĕр кун* /шутри кун/ – *пĕркун* /хальтерех/, *пĕр май* /пĕр мел/ – *пĕрмай* /ялан/, *çур утрав* /утрав çурри/ – *çурутрав* /материк пайĕ/, *çур çĕр* /талăк саманчĕ/ – *çурçĕр* /тавралăх енĕ/, *арçын ача* /ар çын ача çырни ăнланма йывăрлатнă пулĕччĕ/».

Документ пур, правилăсем пур... Унта хăш сăмахсене пĕрле çырмаллине уçăмлă кăтартнă. Ыйту сиксе тухать: хăш вăхăтра тата кам хистенипе вĕсене уйрăм çырма пуçланă-ха? Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕн правилисем кирек камшăн та саккун пулмалла пек туйăнать. Пурин те /вĕренекен-и е вĕрентекен-и, ăсчах-и е ахаль вулакан-и.../ ăна пăхăнмалла. Манăн капла çырас килет те, маншăн çапла илемлĕрех е килĕшÿллĕрех тени мĕн патне илсе çитерет-ха? Йывăрлăхсем кăна кăларса тăратать. Тата тавлашу çуратать.

«Çавра сĕтел» ларăвĕнче хĕрÿ калаçакан çын чылай пулчĕ. Юлашкинчен çапларах сĕнÿсем пайăрланса çирĕпленчĕç. ЧР Министрсен Кабинетне чăваш чĕлхин орфографипе пунктуаци правилисен çитменлĕхĕсене тупса палăртас тĕллевпе ăна халăх хушшинче сÿтсе явассине йĕркелеме; патшалăх чĕлхи пек усă курнă чухне хальхи чăваш литература чĕлхин нормисене çирĕплетмелли йĕркене палăртма; Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин саккунĕсемпе килĕшÿллĕн географи объекчĕсен, çул тата ытти кăтартмăшсен ячĕсене тĕрĕс çырассине /кунта хулари чарăну вырăнĕсен чăвашла ячĕсем çухални пирки сăмах пырать/ тивĕçтерме сĕнсе хăварчĕç. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ кăсăкланакан мĕнпур çынна явăçтарса чăваш чĕлхин орфографипе пунктуацин çивĕч ыйтăвĕсемпе ăслăлăх-практика конференцийĕ ирттерĕ.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

---

ПУЛĂМ

# Вĕсем халăх асĕнчех

## Шел, список вĕçĕ курăнмасть-ха

***Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи пекех чÿк уйăхĕн 30-мĕшĕнче, Шупашкарта та, республикăри пур районта та политика репрессийĕсен тĕпсĕр «авăрĕнче» пурнăçран уйăрăлнисене, пуç янă çĕртен таврăнайманнисене асăнса ячĕсене сăвапламалли кун, хурлăхлă митингсем иртрĕç.***

Шĕкĕр хуламăрти Богдан Хмельницкий урамĕнчи çава çинчи палăк умне халăх йышлă пухăнчĕ. Пăхатăн та вĕсем çине – тĕлĕнетĕн: ăçтан вăй-хăват илнĕ, мĕнле чăтса ирттернĕ хăрушă çав вăхăта? «Тамăк хуранне» лексен те чун тасалăхне çухатман, малашлăх çинчен ĕмĕтленнĕ, пуласлăха пурпĕрех çутă тĕспе курнă. Çук, асап çулĕпе утнисем террор тапхăрне ылханмаççĕ, хăйсем чĕрĕ юлса паянхи пурнăç лайăхланса улшăннине курма май килнĕшĕн, йăха тăсма пултарнăшăн чĕререн хĕпĕртеççĕ. Ара, нумайăшĕн çулĕ каялла выртман-çке: хĕн-хурпа, чирпе, чăтма çук йывăр ĕçпе тăван çĕртен аякра куç хупнă.

Республикăн массăллă информаци хатĕрĕсенче тăтăш пичетленсе пыракан «Таса ятне таврăнă» списокра – хур курнă хыççăн реабилитациленĕ вун-вун çын хушамачĕ. Тĕрлĕ ÿсĕмрисем: кăкăр ачинчен пуçласа пичĕ пĕркеленнĕ ватă таранах. Хăрушши – çак списокăн вĕçĕ курăнмасть-ха.

– Çав тискер тапхăр паянхи çамрăксен, килес ăрусен асĕнчен нихăçан та ан тухтăр, вĕсен пурнăçне ан ваттăр, – терĕ астăвăм митингне уçнă май репрессинче шар курнисен республикăри общество организацийĕн-ассоциацийĕн ертÿçи А.Марков. Анатолий Семенович хăйĕн сăмахĕнче Сталинăн тоталитарлă режимĕн хăрушă тапхăрĕнче пирĕн республикăри 60 пин яхăн çын – культура ĕçченĕсем, çыравçăсем, хуçалăх ертÿçисем, вĕрентекенсем, тĕн çыннисем, ыттисенчен кăшт урăхларах шухăшлакансем, хăйĕн тĕрĕс сăмахне шикленмесĕр калакансем – шар курнине палăртрĕ. Вĕсен ячĕсем ан манăçчăр тесе ассоциаци те, унăн районсенчи уйрăмĕсем те питĕ пысăк ĕç тăваççĕ. Акă, таса ячĕсене таврăнисен «Астăвăм кĕнекин» икĕ томне пичетлесе кăларнă. Унăн виççĕмĕш томĕ те хатĕрпе пĕрех. Районсен те пур вăл. Кĕçех Елчĕксемпе Тăвайсем сăвап кĕнекисене производствăна ямалла. Муркашсем те хастар. Етĕрнесемпе Улатăрсем те тав сăмахне тивĕç.

Аслă террор пуçланнăранпа кăçал 75 çул çитрĕ. Вăхăт шăвать, чылай пулăм историре юлать. Çапах усалли те манăçмасть, астăвăмăн йывăр тиевĕ евĕр халăх асĕнче упранать. Хурлăхлă митингра сăмах илнĕ ытти çыннăн та – Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕн Игорь Кушевăн, репрессиленĕ тăванĕсен ячĕпе тухса калаçнă София Андрияновăн, Шупашкарти Çветтуй Троица мăнастирĕн наместникĕ Василий /Паскье/ архимандритăн – чунĕ хумханчех. Вĕсем синкер тапхăрта пурнăçран уйрăлнисен сăваплă ячĕсене ялан сума суса асра тытма чĕнчĕç. Василий архимандрит молебен ирттерчĕ. Пухăннисем палăк умне чĕрĕ чечексем хучĕç. Вĕсем çак самантра каялла таврăнайманнисен чĕрĕ юнĕ пек туйăнчĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

---

# Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнче кăларнă 151-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн саккунлăха тата право йĕркине çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерствин экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен управленийĕн налук тÿлевĕсен сферинчи преступленисемпе кĕрешекен пайĕн пуçлăхĕн çумне полици подполковникне **Марсель Халимуллович ХАЛИЛОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

сывлăх сыхлавĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Республикăн психиатри больници» бюджет учрежденийĕн Шупашкар хулинчи диспансер уйрăмĕн психотерапи пÿлĕмĕн врач-психотерапевтне **Алина Владимировна АЛЕКСЕЕВĂНА,** Раççей Федерацийĕн Сывлăх сыхлавĕн министерствин федерацин «Федерацин травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕ» патшалăх бюджет учрежденийĕн 3-мĕш травматологипе ортопеди уйрăмĕн врач-нейрохирургне **Валерий Александрович СОЛОВЬЕВА – «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ»,** Чăваш Республикин «Республикăн ачасен клиника больници» бюджет учрежденийĕн физиотерапи уйрăмĕн медицина сестрине **Татьяна Гурьяновна БОНДЕРОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ятсем панă;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Чăваш патшалăх академи симфони капелли» бюджет учрежденийĕн оркестрăн аслă категориллĕ артистне **Наталия Викторовна КИРЕЕВĂНА,** Чăваш Республикинчи Шупашкар районĕнчи «Бичурин тата паянхи кун» музей» бюджет учрежденийĕн директорне **Ирина Витальевна УДАЛОВĂНА,** Шупашкар хулинчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан «Пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан 61-мĕш вăтам шкул» бюджет учрежденийĕн хореографи преподавательне, Шупашкар хулинчи муниципалитетăн «Салют» культура керменĕ» бюджет учрежденийĕн бал ташшин «Дуэт» халăх ансамблĕн балетмейстерне **Сергей Игорьевич ЯРУТКИНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

педагогикăри, воспитани енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар районĕнчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан «Янăшри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул» бюджет учрежденийĕн директорне **Вячеслав Николаевич ДИМИТРИЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

халăх ыйтăвĕсене татса парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи тулли мар яваплă «Суту-илÿ тата апатлану» общество директорне **Елена Павловна КОРЯКИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХ ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТАТСА ПАРАКАН СФЕРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

строительствăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Хуçалăхсен пĕрлехи «Вурнарская» строительство организацийĕ» акционерсен хупă обществин штукатур-малярне **Светлана Степановна ИВАНОВĂНА,** Шупашкар хулинчи тулли мар яваплă «Строительство управленийĕ-28» обществăн производство пайĕн пуçлăхне **Вера Викторовна ЯКОВЛЕВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔ»** хисеплĕ ят панă.

АЙККИНЧИ

# Улмалуйра улма нумай

## Мĕнле пурăнаççĕ пирĕн кӳршĕсем?

***«Çул тата газ пур, апла тăк пĕтместпĕр-ха», – теççĕ Куславкка районĕнчи Çӳлти Улмалуй ялĕнче кун кунлакансем. Чăн та, «тĕнче шăтăкĕнче» ларакан тата хăйĕн йышĕпе сăнне çухатса пыракан ялсемшĕн асфальт çул тата кăвак çулăм пурри питĕ пĕлтерĕшлĕ. Анчах мĕншĕн пĕтсе пыраççĕ-ха Çӳлтипе Аялти Улмалуйсем? Çак ыйтăвăн хуравне тупас тĕллевпех икĕ кустăрмаллă тимĕр урхамахпа çула тухрăм.***

### Америка мурĕ çавăрса илнĕ

«Пĕр тăвансем» /икĕ яла çапларах калас килчĕ/ пирĕн ялăмран 3-4 çухрăмра кăна вырнаçнă пулин те çитсе курма май килмен. «Унта нимĕн те çук, 4-5 çын çеç пурăнать, йытă кăна улать», – тетчĕç вĕсем пирки сăмах пуçарсан иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчех. Темиçе çул каялла «пĕр тăвансем» патне çитме çул та пулман. «Çул тунă хыççăн хамăра вăй илнĕ пекех туйрăмăр. Унсăрăн пачах пĕтеттĕмĕр пулĕ. Тавах пурне те пире манманшăн», – хĕпĕртеççĕ Улмалуйсем. Хам та çак çул пурришĕн савăнса Çӳлти Улмалуйне çитрĕм. Анчах та укăлчарах кашни çынна кĕтсе илекен сăнсăр ӳкерчĕк чунăма хурлантарчĕ: йывăç-тĕм айне путнă /симĕс ешĕлккесем халь-халь вĕсене пусарас пекех туйăнчĕç/, чалăшнă çуртсем тата ял пуçĕнче вырăн тупнă пĕр чӳречеллĕ клуб... «Америка мурĕ – вĕрене – яла çавăрса илчĕ, пире тĕп тăвассăн туйăнать», – терĕç каярах çак пулăм çинчен ял çыннисем.

Кунта, чăнах та, никам та пурăнмасть пулĕ!? Кăвак тӳпе евĕр аякранах курăнса ларакан çурт тĕлĕнчен йытă сассине илтсен чунра лăш! пулса кайрĕ. Эпĕ урампа малалла иртрĕм. Урама ик енне уйăракан çырма урлă каçсан тинех пĕр çынна тĕл пултăм. Ку – 76-ри Юрий Сумбаев. Тивĕçлĕ канăва тухсан яла куçса килнĕ мучипе сăмах тапратрăм. Кăштахран пирĕн калаçăва илтсе мăшăрĕ Юлия Александровна тухрĕ.

«Яла мĕншĕн Улмалуй тенĕ-ха? Ĕлĕк ку тăрăхра панулми е çĕрулми нумай çитĕнтернĕ-ши?» – кăсăклантăм эпĕ. «Çапла пулĕ, ял кун-çулĕ пирки пĕлсех каймастăп. Анчах та пирĕн патăмăрта нихăш çимĕçĕ те лаптăкăн-лаптăкăн ӳснине ас тумастăп. Сăпас валли те пасартан туянаттăмăр. Тахçан уйра сад пахчи пурччĕ, сивĕ хĕлле пĕтрĕ. Халĕ вара кашни килте улма /ку тăрăхра панулмие çапла калаççĕ/ нумай. Кăçал акă питĕ ăнса пулчĕ, нимĕн тума аптăратпăр», – текелесе кинемей ман валли пĕр хутаç хĕрлĕ питлĕ çимĕç илсе тухрĕ.

### Кивĕ клуб аса илтерет...

Çӳлти Улмалуй ĕлĕкренпех пысăках мар ял шутланнă. Çапах кашни çемьере сак тулли ача-пăча пулнă. Хăй вăхăтĕнче ял канашĕ те йĕркеленнĕ, 1931 çулта ял-йыш «Авангард» колхоза пĕрлешнĕ. Тĕрлĕ вăхăтра лавкка, пуçламăш шкул, клуб, библиотека, трахома пункчĕ, ферма уçăлнă. Халĕ вĕсем хăш вырăнта пулнине йывăç-тĕмпе симĕс курăк кăна аса илтерет. Тĕрĕссипе, культура вучахĕн çурчĕ кăна пур, анчах вăл та тăлăххăн ларать. Алăкĕ те пурин валлиех уçă, унта кĕрсе курни кăмăла хуçрĕ: кашни кĕтесре – çӳп-çап купи, тасамарлăх. Хушăран ял çыннисем унта доминолла выляма кĕреççĕ, Ваттисен кунĕнче концерт иртет. Сумбаевсем каланă тăрăх – клубра Вячеслав Батманов нумай çул ĕçленĕ, вăл сарăмсăр вилсен культура çурчĕ хупăннă. Çак çуртра клуб уçиччен пуçламăш шкул пулнă, иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче йыш сахалланнипе ăна хупнă. Çав тапхăртанпа ачасем Энтри Пасарне вĕренме çӳреççĕ. Лавкки те тахçанах çĕр çинчен «çухалнă» пулин те аптрамаççĕ-ха Улмалуйсем: кӳршĕ ялтан эрнере икĕ хут килекен пĕр усламçă тĕрлĕ таварпа, апат-çимĕçпе тивĕçтерет. Медицина пулăшăвĕ кирлĕ тĕк вара темиçе çухрăм утмах тивет ватăсен.

Юлия Александровна каланă тăрăх – 1965 çулта «Шуçăм» совхоз йышне кĕрсен ял йăшма пуçланă. Çынсем цивилизацие çывăхарах пулма шухăшланă ахăртнех: пĕрисем Энтри Пасарне куçса кайнă, çамрăксем хуланалла тухса тарнă... Хуçалăх предприятийĕ салансан вара ку «ĕç» тата вăйланнă. «Ĕлĕк ялта 30 киле яхăн пулнă, халĕ – 15. Вĕсенчен 8-шĕнче кăна çын пурăнать, ыттисем дача ятне илтнĕ е пачах та хупă лараççĕ. Хĕл каçма юлаканнисем – 15 çын ытла», – паллаштарчĕç Сумбаевсем.

Чылай çул каялла ку таврара хăмла, тыр-пул ӳстернине, ĕне, сурăх, чăх, лаша фермисем пулнине ĕненес те килмест – пушанса юлнă хирте нимĕн те çук. Кĕтӳ пухмалăх вырăх пурри кăна тунсăха сирет – 5-6 ĕнепе 10-15 сурăх. Хальхи вăхăтра ялăн пĕр енчи уйĕнче хыт-хура кашлать, тепĕр енче – вылăх-чĕрлĕх усрамалăх нумай çул ӳсекен курăк, тыр-пул анисем курăнкалаççĕ. Ялта шыв ыйтăвĕ те çивĕч. Пĕр-ик килте кăна тарасаллă пусă пур. Ыттисем вара шыв ăсма çырмана утаççĕ: вылăх-чĕрлĕх валли йăтмалла-и, мунча хутмалла-и, пахча çимĕç шăвармалла-и – çырмари çăл çăлать. Шыв пăрăхĕ пирки тахçанах ĕмĕтленме пăрахнă Улмалуйсем.

**ЧЫЛАЙ ÇУЛ КАЯЛЛА КУ ТАВРАРА ХĂМЛА, ТЫРПУЛ ӲСТЕРНИНЕ, ĔНЕ, СУРĂХ, ЧĂХ, ЛАША ФЕРМИСЕМ ПУЛНИНЕ ĔНЕНЕС ТЕ КИЛМЕСТ – ПУШАНСА ЮЛНĂ ХИРТЕ НИМĔН ТЕ ÇУК**

### Украина ахрăмĕ пĕчĕк яла та çитнĕ

Çӳлти Улмалуйра Украина çыннисене тĕл пуласси не пачах та шухăшламанччĕ. Урамра выляса çӳрекен ачасене курсан хĕпĕртерĕм: кунта шăпăрлансем те пур иккен. «Украинăран тарса килнисем», – тĕлĕнтерчĕç мана ватăсем. Вĕсемпе çывăхрах паллашас тесе Ильинсем патне васкарăм.

Галина Баутина – ку ялта çуралса ӳснĕ чăваш хĕрĕ. 40 çул каялла мăшăрĕпе Украинăна – Донецк облаçĕнчи Горловка хулине – пурăнма куçса кайнă. Анчах вăрçă пуçланнине пула ачисемпе тата мăнукĕсемпе тăван яла амăшĕ патне таврăннă. Ывăлĕн çемйи Шупашкара вырнаçнă: ĕçлеççĕ, ачисем садике тата шкула çӳреççĕ. Упăшкипе хĕрĕ вара Украинăрах юлнă, вĕсем шахтăра вăй хураççĕ. Галина Михайловна та унта фельдшер пулнă.

«Хула çине вут-çулăм тăкăнма пуçласанах тухса килтĕмĕр. Бомба пăрахнипе пурăнмалли çуртсем ишĕлчĕç, чиркĕве аркатрĕç. Халĕ тата хăрушăрах унта, мĕн пулса иртнине телевизорпа кăна пĕлетпĕр – çывăх çыннăмăрсемпе çыхăну çук. Ырă-сывах пуласса шанатпăр, турра кĕл тăватпăр. Хулара стерол завочĕ пур, çавă ытларах шиклентерет: ун çине бомба лексен тата хăрушăрах пулĕ», – пĕлтерчĕ вăл.

Украина хĕрарăмĕ каланă тăрăх – 300 пин çынлă Горловкăра украинсем, вырăссем, тутарсем тĕпленнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ – Халăх республикишĕн. Ахăр самана пуçланиччен юлашки çулсенче хула çыннисем ытлă-çитлĕ пурăнма тытăннă, шалу тӳленĕ, пенси илсе тăнă. Амăшĕ кунтах юлма хистет пулин те Галина Баутина хулана каялла таврăнас шухăшлă. «Чун унтах туртать. 40 çул – пĕчĕк тапхăр мар», – терĕ малашлăха шанакан ентеш. Пĕчĕк шăпăрлансем те – 4-ри Мишăпа Даша, 6 çулти Вика – килшĕн тунсăхлаççĕ. «Ялта пурăнма питĕ лайăх. Тăраниччен сĕт ĕçетпĕр, ăна туянма лавккана та чупмалла мар. Кукамай патне килсен уçăлса çӳретпĕр, кӳршĕ ачисемпе вылятпăр. Шупашкар та кăмăллă, пирĕн хулари пекех машина нумай», – чĕвĕлтетрĕç вăрçă инкекне маннă шăпăрлансем.



*• Юлийăпа Юрий Сумбаевсем.*

### Чи ватти, чи хисеплли

Те журналист килнине кура, те кулленхи пурнăç çапла – кăнтăрла тĕлнелле урамра ача-пăча сасси илтĕнме пуçларĕ, çынсем каллĕ-маллĕ çӳреме тытăнчĕç. Асламăшĕ-кукамăшĕ патне хăнана килнĕ мăнукĕсем иккен кусем. Ялта Энтри Пасар шкулне çӳрекен ача та пур – пуçламăш класра вĕренекен Юра Батманов. Ăна илмешкĕн Улмалуйне шкул автобусĕ те килет. Ашшĕ-амăшĕ кӳршĕ ялта ĕçленĕрен вĕсемпе курса калаçаймарăм, ачине те тĕл пулаймарăм. Чăннипе, вĕсем ялти пĕртен пĕр çамрăк çемье. Икĕ килте – амăшĕпе хусах ывăлĕ, Казахстанран куçса килнĕ упăшкипе арăмĕ те кун кунлаççĕ ялта, пĕччен пурăнакансем те пур. Паллах, ытларах пайĕ – тивĕçлĕ канăва тухнисем.

Чи ватти те чи хисеплли – 91 çулти Евгения Купцова. Тăхăр теçетке çула çитнĕ тепĕр кинемей – Елена Мухина, ĕмĕрĕпе ялти фельдшер пунктĕнче акушеркăра ĕçленĕскер хальхи вăхăтра хĕрĕ патĕнче хулара пурăнать. Евкен аппа вара халĕ те сурăх тытать, пахчара кăштăртатать. Çӳлти Улмалуйне Вăрмар районĕнчи Çӳлти Кинчертен качча килнĕскер виçĕ хĕрпе пĕр ывăл çуратса ӳстернĕ. «Юрать, кĕрӳ пулăшать, унсăрăн йывăртарах килетчĕ. Юлашки вăхăтра чирлекелеме тытăнтăм, ура та утми пулчĕ, – пуçларĕ калаçăва Евгения Васильевна. – Хамăн пурнăçăмра тем те курнă, тем те тӳснĕ – 90 çула çитессе шухăшламан та. Вăрçă вăхăтĕнче кӳршĕ ялсене окоп чавма çӳреттĕмĕр, Улатăр районне тата Атăл леш енне вăрман касма илсе каятчĕç. Куславкка районĕнчи Тĕрлемес ялĕ çывăхĕнчи çырмара юман касса тăпра кăларни те халĕ те асра. Аслă çул хĕрринчех çывăраттăмăр, апатланма пĕр татăк çăкăр паратчĕç». Ялта пурăннă чухне çамрăк хĕр фермăра ĕçленĕ: сурăх, сысна, чăх тата лаша пăхнă. Çӳлти Улмалуйне качча килсен хăмла ĕçĕнче вăй хунă. «30-тан иртсен качча тухрăм. Анне пĕччен тесе парса ямастчĕ. 1958 çулта Николай Прокофьевпа çемье çавăртăмăр. Вăл та çамрăках марччĕ. Микуç вăрçа хутшăннă, анчах тыткăнра пулнипе ветеран ятне тивĕçеймерĕ. Малтанлăха колхоз садне пăхрĕ, кайран хампа пĕрле хăмлаçăра тăрăшрĕ. Упăшка вилни те 20 çул ĕнтĕ», – ассăн сывларĕ кинемей. Ĕмĕрĕпех ялта пурăннипе хуланалла чун туртмасть унăн. «Кунтах лайăх: лăпкă, уçă сывлăш – ватă çынна урăх мĕн кирлĕ. Пушă вăхăтра телевизор пăхатăп, сенкер экран умĕнче ларнă май нуски-алсиш çыхатăп. Хаçат вулама юрататăп, – ĕлĕкхи пурнăçа аса илнĕ май хальхи самана çинчен калаçма васкарĕ Евкен аппа. – Килсерен 5-10-шар ачаччĕ, паян... Юрать, çуллахи вăхăтра ача-пăча сасси илтĕнет. Çакă та кăмăл-туйăма çĕклет. Тăван тăрăха каялла таврăнакансем пурри те савăнтарать. Мускавра пурăнакан хĕрĕм те пенсие тухсан кунталла килесшĕн-ха», – хĕпĕртенине пытармарĕ вăл.

### Аялти Улмалуй çĕнелет

Аякран пăхсан Аялти Улмалуй ялне шыраса та тупаймăн. Чăтлăхра лараканскере кунта ял вырнаçнă тесе калаймăн. Йывăç айне путнăскер çуллахи вăхăтра вăрманлăха аса илтерет. Пĕчĕк пулин те ялта 4 урам: Çӳлти, Аялти, Малтикас тата Кайрикас. Пĕр çынна та пулин курасчĕ текен шухăшпа Малтикаспа утрăм. Телее, пахчара тăрăшакан Алевтина Максимовăна тĕл пултăм. «Атте-анне килне пăрахас килмест, унран лайăххи нимĕн те çук. Кашни çулла яла килетпĕр, пахча çимĕç ӳстеретпĕр», – терĕ кунта çуралса ӳснĕ, халĕ хулара пурăнакан Алевтина Георгиевна. Юлашки çулсенче ял çĕнелме тытăннине палăртрĕ вăл: пӳртсене юсаççĕ, киввисем вăрăнне дачăсем çĕклеççĕ. Чăн та, хальхи йышши хатĕрсемпе илемлетнĕ çурт сахал мар унта. Çакна ĕнентерсех мăлатук сасси ял тăрăх саланчĕ. Акă пирĕн умах строительство материалĕсем тиенĕ машина килсе ларчĕ, арçынсем ăна йăпăр-япăр пушатма тытăнчĕç. «Кусем те юсав ĕçĕсем пуçласшăн», – пĕлтерчĕ хĕрарăм.

Ĕмĕрне тăван ялтах пĕччен ирттерекен 75 çулти Андрей Турганов та ашшĕн çуртне пăхсах тăрать, юхăнма памасть. «Пурăнатпăр майĕпен кăштăртатса, малаллах пăхатпăр. Акă юсав ĕçĕсем пуçларăм, ĕмĕрĕ вăрăм пултăр. Пӳрте шыв кĕрет, пусă алтнă, ăшши те пур. Чăх-чĕп, сурăх усратăп. Арăм вилни 14 çул çитрĕ, унпа 5 ача çуратса ӳстертĕмĕр. Пĕр хĕрĕм ялтах пурăнать, ывăл Украинăра тĕпленнĕ, офицер. 40 çул ытла совхозра трактористра ĕçлерĕм», – хăйĕнпе паллаштарчĕ Андрей Андреевич. Вăл каланă тăрăх – Аялти Улмалуйра 10 çын пурăнать, 7-шĕ хĕл каçать. Ыттисем – дачниксем. «Ялта çынсемпе кил-çуртсăр пуçне урăх нимĕн те çук», – тĕлĕнтĕм эпĕ. «Çапла. Унччен те пулман. Лавкка пурччĕ, уйрăм колхоз пулнă, ял çумĕнче ферма кĕрленĕ. Кашни килте 5-7-шар ачаччĕ», – хурланса пĕлтерчĕ арçын. Мĕншĕн апла-ха? «Шуçăм» совхоз йĕркеленнĕ хыççăн пĕтме пуçланине палăртрĕ вăл та.

### Пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

Чăннипе, йăмра туратти пек хуçăлса ӳкме шухăшламаççĕ-ха Аялти Улмалуйсем, ытти ялти пекех пахча çимĕç лартса ӳстереççĕ, ӳркенмесĕр ĕçлеççĕ. Унта наянланса ларакан та, ĕçсĕр аптракан та çук. Пахча сухаламалла е мĕн те пулин турттарса килмелле – Çӳлти Улмалуйри Валерий Ильин тракторпа пулăшать. Кил-çурта юсамалла е çĕннине çĕклемелле – ялти ăста платник Валерий Карташов яланах ĕçе хатĕр. Мăшăрĕпе Людмилăпа тивĕçлĕ канăва тухсан хуларан куçса килнĕ. Юнашар яла çитсе килмелле пулсан та вĕсенчен пулăшу ыйтма васкаççĕ – килте мотоцикл пур. Тăван яла таврăннăшăн пĕрре те ӳкĕнмест çемье, кунта та пурăнма май пуррине палăртаççĕ вĕсем.

Юр-вар таврашне юратаканнисем Смирновсем патне утаççĕ: амăшĕпе хĕрĕ икĕ ĕне тытаççĕ. Сĕт пухма машина та килет иккен яла. «Ĕне усрама йывăрланса пырать пире, ватăсене. Утă-улăм хатĕрлеме çăмăл мар, пĕтĕмпех алăпа çулмалла. Кутамккапа йăтма тивет. Юрать, хĕрĕм Валентина Шупашкартан куçса килчĕ», – калаçăва пуçларĕ 87-ри Зинаида Сергеевна. Ку яла Канаш районĕнчи Вырăскас Пикшихрен 1953 çулта качча килнĕскер ĕмĕрĕпе хăмлаçăра вăй хунă. «Ĕлĕк пысăк тухăç паратчĕ, татса пĕтерме май çукчĕ. Çапах питĕ вăйлă ĕçлеттĕмĕр. Халĕ те нимĕнле ĕçрен ютшăнмастăп, кил хушшинче кăштăртатсах кун иртет, – чăпар чăххисене апат панă май сăмахларĕ кинемей. – Вăрçă вăхăтĕнче вăрман касма илсе каятчĕç, лашапа тавар турттараттăмăр. Упăшкапа механизаторсен шкулĕнче паллашрăм, юнашар лараттăмăр. Вăл колхозра çак енĕпех тăрăшрĕ. Икĕ ача çуратса ӳстертĕмĕр». Ял Энĕш хĕрринче вырнаçнăран кашни çуркунне шыв илет иккен, çулла вĕрене ашкăрса ӳсни те кулянтарать ватă çынна. Смирновсенчен аякрах мар пурăнакан тепĕр кинемей – Любовь Галкина. Пĕччен пурăнаканскер пахчи-пахчипе сухан лартса ӳстерет. Унăн канма та вăхăт çук ахăртнех – тĕл пулаймарăм. «Тепĕр урама сухан тирпейлеме кайнă», – пĕлтерчĕç кӳршĕсем. Ялти çынсене шутламалăх алăри пӳрнесем те çитеççĕ пулин те кашнинпех курса калаçаймарăм. Кĕрĕн кĕске кунĕсенче пур ĕçе те хăвăртрах вĕçлемелле-çке.

### Çухалнă сала

17-мĕш ĕмĕрте Чăваш хутлăхĕнче Исенево /унăн чăвашла ятне никам та пĕлмест, тĕне кĕмен арçын ятĕнчен пулса кайнă ахăртнех: Исен е Исентей/ ятлă ял пĕрре кăна пулнă. Сĕве хулин 1647-1651 çулсенче çырса пынă кĕнекинче ăна Кармал шывĕ хĕрринче ларакан Андреевка тесе палăртнă. 18-мĕш ĕмĕрте çак ял çĕрĕсене Апехтин помещик çавăрса илнĕ, унта вырăссем куçса килме пуçланă. Çак сăлтава пула чăваш хресченĕсем тухса кайма тытăннă, темиçе çухрăмра вырнаçнă Аялти Улмалуй /Нижнее Исенево/, Çӳлти Улмалуй /Верхнее Исенево/ тата Пишенкасси /Исенево/ ялĕсене пуçарса янă. Анчах та помещик килсе кĕнĕ ял – Вырăс Сали /Русское Исенево/ – иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтнĕ. Ĕлĕк унта шкул та ĕçленĕ, ял çумĕнче пысăк ферма та пулнă. Кармалпа Çӳлти Улмалуй хушшинче ларнă ял вырăнĕнче халĕ йывăççем кăна ӳсеççĕ. Çапах та унта пурăннă вырăссене çынсем халĕ те манман: «Вĕсем лашасемпе кĕрлеттерсе çӳретчĕç, тăрантас хыçĕнчен тусан кăна мăкăрланса юлатчĕ», – теççĕ ватăсем. Аса илтермелле: Вырăс Салинчи çĕрсене паллă çыравçăн тата этнографăн Александра Фуксăн аслашшĕ, кайран ашшĕ Андрей Апехтин тытса тăнă. Çак ялтах унăн шăллĕ Николай çуралнă тесе çирĕплетеççĕ тĕпчевçĕсем.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ




# Халăха парнеленĕ пурнăç

***Авăн уйăхĕн пуçламăшĕнче Красноармейскинче пурăнакан Михаил Прохорович Прохоров 90 çулхи юбилейне паллă турĕ. М.Прохоров 1924 çулта Шăмар Тусай ялĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш, Упири тулли мар тата Красноармейскинчи вăтам шкулсенче вĕреннĕ. Вăрçă пуçланнă кун – 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче – алла вăтам пĕлĕвĕн аттестатне илнĕ. 17-ри каччă çулталăк райфон Тусай ял Канашĕнчи налук агентĕнче ĕçленĕ. 1942 çулхи çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ. Малтанах саппас полкра хĕсметре тăнă. 1943 çулхи кăрлач-утă уйăхĕсенче çар вăхăчĕн кĕске программипе Томскри 2-мĕш артиллери училищинче вĕреннĕ. Кĕçех кĕçĕн лейтенанта фронта ăсатнă.***



*• Вăрçă тата ĕç ветеранĕ М.Прохоров.*

М.Прохоров çапăçусене Украинăри Мерефа хули çывăхĕнче /Харьковран инçех мар/ кĕнĕ, 76 мм тупăсен взвочĕн командирĕ пулнă. Вăрçă вĕçлениччен малти позицисенче çапăçнă. Украина, Молдави, Венгри çĕрĕсемпе иртсе Австриваррине çитнĕ. Вăл Днепр юхан шывĕшĕн пынă çапăçусене, Новоукраинка хулипе Помошная чукун çул станцине, Одесса облаçĕнчи Первомайск хулине ирĕке кăларма хутшăннă. Ясско-Кишинев операцири, Тисса юхан шывĕпе Сольнок хулинчи, Будапештăн кăнтăр-хĕвел анăç пайĕнчи, Асад хулинчи, Балатон кӳлли çывăхĕнчи тата ытти хаяр тытăçура палăрнă. Çавсемшĕн И.Сталинăн Тавне çичĕ хутчен тивĕçнĕ. Ăна II степень Тăван çĕршывăн вăрçин орденĕпе, «Будапешта илнĕшĕн» тата «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» медальсемпе наградăланă. 1947 çулхи утă уйăхĕнче тăван киле таврăннă.

1947-1951 çулсенче Чăваш патшалăх педагогика институчĕн истори факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. Унтан Упири вăтам шкулта историпе черчени учителĕнче тата Именкассинчи вăтам шкул директорĕнче ĕçленĕ. 1956 çулхи ака уйăхĕнчен тытăнса 1962 çулччен – райканаш ĕçтăвкомĕн культура пайĕн заведующийĕ. Тата виçĕ çул ытларах – Красноармейскинчи вăтам шкулти историпе географи учителĕ. Михаил Прохорович – 1965 çулхи раштавран пуçласа 1973 çулхи утă уйăхĕччен райĕçтăвком председателĕн çумĕ. Каярахпа – Красноармейски вăтам шкул учителĕ тата директорĕ /10 çул/, УПК преподавателĕ, РОНОн хуçалăх ушкăнĕн инженерĕ.

Красноармейски ялĕнче вăй хунă чухне Михаил Прохорович строительство тата тирпей-илем енĕпе нумай тăрăшнă. Унăн проекчĕпе тата вăл йĕркелесе пынипе районти культура çуртне, унăн çывăхĕнчи скверти Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунă ентешсене асăнса лартнă обелиска, Гурий Степанов палăкне, вăтам шкул çурчĕ умĕнчи скверти фонтана, районти шалти ĕçсен пайĕн администраци çуртне, хăна çурчĕпе столовăя, вăтам шкулăн 72 вырăнлă интернатне, виçĕ автомашина вырнаçмалăх гаражне тунă. Вăл ертсе пынипех Красноармейски /халĕ – Трак/ вăтам шкулĕн 720 ача вĕренмелĕх çуртне хăпартнă.

Мирлĕ вăхăтри ĕçшĕн те Михаил Прохорович тĕрлĕ наградăна тивĕçнĕ. Çав шутра – «Ĕçре палăрнăшăн» /1971/, «Ĕçри хастарлăхшăн. В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май» /1970/, «СССР летчик-космонавчĕ А.Г.Николаев» /2009/ медальсем, РСФСР Культура министерствипе культура ĕçченĕсен профсоюзĕн Тĕп комитечĕн /1966/, Чăваш АССР Культура министерствин /1960/, КПСС Чăваш обкомĕпе Министрсен Кабинечĕн /1979/, Чăваш Республикин /1995/ тата ытти Хисеп грамоти. 1978 çулта М.П.Прохорова «РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» хисеплĕ ят панă. 2002 çулта вăл «Вут-хĕмре иртнĕ çамрăклăх» кĕнекешĕн районти Н.Янкас ячĕллĕ премие тивĕçнĕ. Район депутачĕсен Пухăвĕн 2009 çулхи юпа уйăхĕн 12-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе район умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн ăна «Красноармейски районĕн хисеплĕ гражданинĕ» ят панă. Красноармейски ялĕнчи Çĕнтерӳ паркĕнче Мухтав аллейи тăвас ĕçе пысăк тӳпе хывнăшăн М.Прохорова район администрацийĕн Тав çырăвĕпе чысланă.

Михаил Прохорович вăрçă тата ĕç /пенсионерсен/, çарпа право хуралĕн ветеранĕсен районти канашне 12 çул ертсе пынă, халĕ – председатель çумĕ. 8 çул – Чăваш Республикинчи ветерансен канашĕн президиум членĕ, Пĕтĕм Раççейри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен съезчĕн делегачĕ пулнă. Ветерансен организацийĕн ĕçне хастар хутшăннăшăн 1996 çулта ăна вăрçă тата ĕç /пенсионерсен/, çарпа право хуралĕн ветеранĕсен Пĕтĕм Раççейри Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

Хисеплĕ ватă – тавра пĕлӳçĕ те. Хăй çуралса ӳснĕ Тусай ялĕн историне тĕпчет, шыравĕсене кĕнекесенче сăнлать. Акă ял хăçан тата мĕнле пуçланса кайни, кунта пурăннă тата пурăнакан çынсем çинчен «Хăлату /Тусайсем/» кĕнекере туллин çырса кăтартрĕ.

**Виктор ДАНИЛОВ.**
Красноармейски районĕ




